# ЮРАТНĂ АННЕ

Сăвви Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИН






**Хĕвел пек хĕрў çыннăм — анне,**
**Çук санран çывăххи тĕнчере.**
**Эс кўретĕн кил-çурт илемне**
**Юратса ўстеретĕн пире.**

**Хушса юрламалли:**

**Ах, аннеçĕм-анне,**
**Тĕнчере эс пĕрре.**
**Яланах эс çĕклен чĕрене.**
**Тайма пуçăм сана.**

**Çăлтăр пек сутă çыннăм — анне,**
**Çук санран лайăххи тĕнчере, —**
**Сывлăм пек таса чун-хавалне**
**Пурнăçна парнелетĕн пире.**

**Ылтăн пек ырă çыннăм-анне,**
**Çук санран кăмăлли тĕнчере.**
**Çĕклемешкĕн çĕр-шыв хăватне**
**Ăраскал пехиллетĕн пире.**

# ТĂВАНЛĂХ ЮРРИ

**Сăвви Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИН**




**Тăвансемĕр, савнар-и пĕрле,**
**Кĕрекемĕр, илемлĕн кĕрле.**
**Пирĕн çăлтăр çӳлте тӳпере,**
**Çĕр çинче пурăнатпăр пĕрре.**

**Хушса юрламалли:**

**Эй, тăвансем, тăвансем,**
**Мĕн каласа юрлам-ши!**
**Тытса тăтăр ĕмĕрех**
**Тăванлăх пире.**

Ваттисен пиллĕхне манас мар,
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнар.
Пĕр-пĕрне юратса ыр сунар,
Пĕр-пĕрне юратса ал парар.

Эпир хамăр тăван килĕнче,
Кӳлнĕ утăм йăмра çумĕнче.
Ирĕк парăр чунтан тав тума,
Вăхăт çитрĕ сиртен уйрăлма.

# ЭПИР СИРĔН МĂНУКСЕМ

Сăвви Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИН




**Асаттеçĕм, асатте,**
**Асаннеçĕм, асанне,**
**Сирĕн вырăн тĕпелте,**
**Çĕклĕр кил-çурт илемне.**
**Усал сăмах ан пултăр,**
**Килĕштерсе пурăнăр,**
**Пирĕнпеле савăнăр,**
**Тăвансене пуç тайăр.**

**Хушса юрламалли:**

**Çапла пĕрле пулнă чухне**
**Ташлар савнăç ташшине,**
**Ля-ля-ля-ля-ля,**
**Çапла пĕрле пулнă чухне**
**Ташлар савнăç ташшине.**

Асаттеҫӗм, асатте,
Асаннеҫӗм, асанне,
Эпир сирӗн мӑнуксем,
Ҫурхи хитре чечексем,
Сире эпир пӑхӑпӑр,
Чун-чӗрӗрен савӑпӑр,
Тӑванлӑха юратӑр,
Пире шанса пурӑнӑр.

Асаттеҫӗм, асатте,
Асаннеҫӗм, асанне,
Сирӗн вырӑн тӗпелте
Чыслӑ пултӑр ӗмӗрех,

# АСАМАТ КĔПЕРĔ

Кĕвви Светлана НИКИТИНАН
Сăвви В. ДАВЫДОВ-АНАТРИН




Асамат кĕперĕ,
Çÿлте тÿпере.
Çут хĕвел тĕрлерĕ,
Тĕнче çеçкере.

Хушса юрламалли:

Асамат кĕперĕ,
Сар хĕр пек хитре-çке,
Юлчĕ ун чиперĕ,
Пирĕн сăн-питре.

Асамат кĕперĕ,
Ыталать çĕре.
Пуç тайса пиллерĕ,
Тĕррине пире.

# ТАВАХ СИРЕ, АТТЕ-АННЕ

Сăвви Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИН




Тавах сире, атте-анне,
Эсир пире ача чухне
Юрла-юрла сиктернине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

Тавах сире, атте-анне,
Эсир пире юратнине,
Телейлĕ çул пилленине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

Тавах сире, атте-анне,
Эсир пире вĕрентнине,
Пире сăпайлăх кӳнине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.

Тавах сире, атте-анне,
Эсир пире ыр суннине,
Чунăмăра ăшăтнине
Эпир манмастпăр ĕмĕрне.